# Укахви

## Курак.

(Калав*).

I

— Колхозниксен ĕҫкунĕ тăрăх уйăрмали ыраша вăрланăшăн, тата выҫăхсене ҫитермели фонда хăйсем хушшинех салатса лашасене выҫă вĕлервĕшĕн —„Ҫĕнĕ йĕрке“ ятлă колхоз председателĕ пулнă—Нарнăв Якур Иванча, завхозне—Кичемейĕв Ваҫҫил Якăвлĕча, тырă виҫсе тăракан—Кашкăрăв Гаврил Кирилăча, тата выҫăхсене пăхса усракансен пуҫлăхне—Илехменĕв Прохăр Липатăча, Уголовни кодексăн 63-мĕш тата 116 мĕш статйисемпе айăпласа, персе пăрахмала,—тесе вуларĕ Крайри судăн суд пригăварне.

Суд ҫурчĕ шăп. Ҫекретар аллинчи ручкине вырăнтан вырăна куҫарса хуни те илтĕнет. Укахви чĕтресе кайрĕ. Икĕ начарланнă аллисем хăйсем тĕлĕнех чăмăртаннине хăй те сисмерĕ вăл.

—Ҫапла кирлĕ. Ҫапла кирлĕ кашкăрсене. Ҫавсем пирки иккен епĕ, пилĕк ачампа, выҫă ларатăп, ҫиймĕр-пуҫăмăр ҫĕтĕк,—терĕ те, сутра пулнă халăхпа пĕрлех тулала тухса кайрĕ.

Тулта март хĕвелĕ Укахвийе хирĕҫ пăхса йăл!... кулчĕ. Уҫҫăн сывларĕ Укахви. Ҫут тĕнчерен писĕнскерĕн—пурăнасси килсе кайрĕ.

— Шуйттансем!—тет вăл килне кайнă чухне те, выҫă хăварчĕҫ вĕт халăха...

* *
*

Укахви иртнĕ ҫулта ҫу хута повархăра ĕҫленĕ. Хĕрĕх сыншăн пĕҫерсен—ăна пĕр ĕҫкунĕ панă, хĕрĕхрен кайа пулсан—процент тăрăх. Тырă вырса кĕртес вăхăт ҫитиччен куллен 10—15 ҫынран ытла апат ҫитермен вăл. Ҫавăнпа та ҫу хута ĕҫлесе те унăн 65 ĕҫкунĕ анчах пухăннă. Кашни ĕҫкунĕшĕн вăл 5 кило ыраш илнĕ. Пурĕ 325 кило. Ҫемйи—6 кашăк. Пурте пĕчĕк ачасем, ĕҫлемесĕр ҫийекенсем анчах: вĕсем вилнĕ чухăн упăшкинчен йулнăскерсем. Ҫав 20 пăт ыраш̆не авăртса вăл ҫемйине сичĕ уйăха ҫитернĕ; расхутне те ҫавăн ҫинченех илсе хупласа пынă. Ку февраль—ҫăнăх уйăхĕччченех пĕгсе ҫитет. „Нетрудоспособнăйсен“ фончĕ пулман. Ҫавăн пирки Укахви пĕтĕмпех аптраса, колхозăн ҫĕнĕ председателĕ патне пырат.



Хĕрлĕ лав—Шупашкарта.



Республĕкри колхозник ударниксен 2-мĕш сйесне Тутаркас районĕнчен пынă хĕрарăм делегаткăсем.

— Выҫă вилетĕп вĕт, Иван Ванчă, ачасем те макăраҫҫĕ. Чумаралăх пĕрер пăт ҫăнăх „авансăм“ параймăн и, тархасшăн,—йăлăнат Укахви.

Тăлăхсене тем пек шеллесен те председателĕ вĕсене пулăшу параймаст.

— Пĕр кило та ҫук, Укахви акка,—тет председателĕ.

— Апла манăн, ачамсемпе пурнас ҫинченех, вăйăм пур ҫинчех вилес-им?

— Ним те тăваймастăп.—Кивĕ правлени тырăсене салатса пĕтернĕ. Халĕ пирĕн вăрлах та ҫитеймест, фураж та сахал лашасене те выҫă вĕлерсе пĕтерчĕҫ: сакăрвунă лашаран хĕрĕх икĕшĕ ҫеҫ йулчĕҫ. Ҫийĕнчех ҫитерсе турлетмесен—вĕсем те ĕҫе йурăхлă пулас ҫук, тет председателĕ.

— Хĕрĕх икĕ лашапа икҫĕр килĕлĕ колхозăн ҫĕрне йепле акмала?—тĕлĕнет Укахви.

— Ĕнесене кӳлес пулат, Укахви акка.

Укахви ҫак сăмахсене илтсен хĕремесленсех пуҫăннăччă йатлаҫма.—Хам ĕнеме хам аллăмпах парса сире вĕлерттермĕп ĕнтĕ,—тесе тулхăраччĕ вăл малтанах.

Кайарахпа ҫĕнĕ правлени тĕрĕсне, кам айăплине хăй куҫĕпе хăй курса пĕлсен, хăй хăлхипе илтсен урăхла шухăшла пуҫларĕ.

— Тыр пулла вăхăтра акаймасан—тухăҫĕ те тухмĕ, хамăр та выҫă вилĕпĕр. Халĕ ачама ĕлемке йарсан та параҫҫĕ. Колхозра тырă пулмасан—никама та ырлăхĕ тивĕҫ ҫук. Ĕнесене лашасен пайне ҫитерсен вĕсем ĕҫлесе ыванмĕҫ, ĕҫленĕ вăхăтра пире те ҫимели парĕҫĕ те—шухăшларĕ те, Укахви:

---

*) Ку калава Вăтам Атăл крайĕнчи колхоз пурнăҫĕнчен илсе ҫырнă.

— Нимĕн тума та çук.. Килĕшес пулаť санпа Иван Ванч. Халиччен ĕнепе çĕр сухаланине курма мар илтмен те-ха епĕ. Анчах та... Ĕнисем сухалама-сÿреме пултараççĕ пулсан, килĕшмелех пулаť санăн сăмахпа, тесе хучĕ вăл пуçне çĕреле усса.

Çаплах вăл ыйтнă тыррине те илеймерĕ. Мĕншĕн тесен, кивĕ правлени сăтăрла ĕçленипе, колхозăн чăнахах та халĕ авансла памали тырă çук. Çаксене пĕлсе тăнипе Укахви каллех вĕçĕмсĕр тарăхса илет кивĕ правленире ĕçленĕ Найанăв ушкăнне.

II

Çураки пĕтес вăхăтала çур хĕвелĕ хир çине пăхса йалкăшрĕ. Йăвăç-курăк та çулçисемпе сарăлса йешĕре пуçларĕ. Тăрисем кĕмĕл шăнкăрав пек сассисемпе йурласа çÿлерен çÿле хăпараççĕ. Уй чечекĕсем сарăлса, ырă кунсене пăхса çеçкисемпе лăпăсгатаççĕ.

Çуркунне шăтса тухнă чечексем пек „Çĕн йĕрке“ колхозниксем хирĕсене тухса ĕçĕсемпе савăнаççĕ. Вĕсем, выльăхĕсемпе пĕрле, çуракийĕн йулашки гектарĕсене сÿресе акаççĕ. Виçĕ ерне пĕр канми ĕçленĕ пулин те, ывăна та пĕлмеççĕ.

Колхозниксен ĕретĕнче çуркуннехи хĕвел пек çутăлса, ĕнисене выльатса Укахви сÿре сÿрет. Вăл сÿрене тухни те виçĕ ерне иртет. Çав виçĕ ерне хушшинче вăл пĕр кун та ĕçрен йулмасť. Хăшпĕр ирхине, ĕнисене кÿлнĕ вăхăтра унăн кÿрши, Кули:

— Ывăнмарăн и ĕнтĕ, Укахви кума? Пайан манăн кайас мари-и сÿрене? тет.

Кули сÿрене тухсан Укахви хăйĕн ĕçкунĕсем чакасран хăрама пăхаť. Ывăнсан та ĕçлесех пулаť.. Манăн кам ĕçлетĕр тата? Ĕсĕ мĕнма пÿлесшĕн-ха мана? Санăн упăшку та, ывăлу та ĕçлет вĕт-ха?—ÿпкелешерех калаť Укахви.

Тăлăх Укахви ĕçшĕн, ĕçкунĕшĕн тăрăшнине кура Кули хĕпĕртет.

— Сана пÿлесшĕн мар епĕ ку сăмаха калатăп, Укахви кума, тесе йăпатаť вăл ăна.—Манăн măшăрăмпа ывăлăм ĕçлени те çичĕ çынлă çемйене пурăнмалăх çитет. Епĕ сана йăвăр мар-и тесе анчах ку калаçура тапратрăм, тет вăл Укахвине.

— Йăвăр мар, Кули кума, йăвăр мар. Мĕншĕнха йăвăр пултăр? Ĕнем манăн, апатне лаша хисепĕпех çинипе, çур витре сĕт параканскер, пĕр витре тултаракан пулчĕ. Хам пăхса, йĕркелĕ сÿренипе—вăл ывăнмасť те: виç тăват йĕрлĕ сÿреакине, сан ĕнÿпе пĕрле, иккĕшĕ пĕр куна пĕр гектар ним те мар сÿресе тухаççĕ. Çавăнпа епĕ ĕнемпе ĕçлесех 3 ернере чылай ĕçкунĕ илетĕп. Çу хутах çапла ĕçлесен—епĕ ачасемпе текех выçă лармăп, тет вăл хавасланса.

— Ĕçле, ĕçле, Укахви кума, сывă ĕçле. Пурăнăç ĕçе йуратаť çав, тет те Кули Укахвийе куллен кун анкартисем хыçне çитиччен ăсатса йараť.

Укахви пикенсех ĕçлет. Ăна кура халăх та хавасланса ĕçлет.

* * *

Çураки пĕтсен „Çĕн йерке“ колхозĕ йешĕл курăк çине, правлени умне пуху пуçтараť. Пуху пуçлансан, çуракинче ĕçленĕ колхозниксене, çуракине тĕплĕн туса вăхăтлă пĕтернĕшĕн, хĕрÿлĕ салам калаť. Саламсем хыççăн ударникĕсене премипараççĕ. Чи пысăк, хаклă премийĕ—20 метр хĕрлĕ тавар.

— Кама тивĕши ку йапала?—тесе хĕпĕртеççĕ ударниксем.

— Унччен та пулмасť—колхоз председателĕ сăмах пуçлаť. Пурте хăлхисене тăратаççĕ.

— Кивĕ правлени пирĕн колхоз пурăнăçне масар чавса шăтăк умнех çитерсе тăратнăччĕ, тесе пуçлаť председатлĕ.—Тата тепĕр—класлă тăшман ăнсăртран пырса кăшт тĕр гнĕ пулсан—пирĕн çĕнĕрен çуралнă, çутă, малала çитĕнсе çитсе халăха ĕмĕр курман савăнăç кÿрекен, социалисăмла пурнăçа кĕмели колхоз çав масар шăтăкне ÿксе тăпрапах хупланмалаччĕ. Кайарах пулин те епĕр, комуниссем, çав сăтăрлăха курса, тăшмансене халăх сучĕ умне тăратса вĕсен йачесене, хăйсемпе пĕрлех, пурнăçран хуратмала турăмăр. Анчах та... вĕсене пĕтернипех колхоз пурăнăçĕ ура çине тăраймарĕ, пирĕн вĕсем тустарнă пурлăхсем кайала килмерĕç, вилнĕ лашасем те чĕрĕлмерĕç, тата ытти те. Вĕсене урăх майран шыраса тупмала пултăмăр. Колхозниксене сăмахпа та каласа нумай ăнлангармала, вĕренгмеле пулчĕ. Вăл пысăк ĕçри чи малтан ăнкарса колхоза ура çине тăратасшăн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекенсенчен пĕри—Укахви пулчĕ. Укахви хăйĕн çиме çук пулин те, хĕрарăмсене пухăва пуçтарчĕ те, вĕсене ăнлантарса парса ĕнесемпе сÿремели ĕçе йышăнчĕç. Ĕнисемпе çуракийĕн виççĕмĕш пайне ĕçлесе—пилĕк ернелĕх ĕçе виçĕ ернере пĕтерчĕç. Çавăнпа вăл чи малта тăракан, куç умĕнчи пысăк ĕç пулса тăчĕ. Ку ĕçе Укахви пуçласа йарса Укахвийех йĕркелĕ турĕ. Вăл пирвайхи ударницă пулчĕ. Çавăнпа ăна, Укахвийе, премии паракан комиссĕ ырласа, мухтаса чи пысăк, чи хаклă парне пама йышăнчĕ. Укахвие чи пысăк, чи хаклă премии паратпăр: вăл—акă. Ме, тыт, Укахви,—тесе 20 метр хĕрлĕ тавар параť Укахвийе председатлĕ.

Укахви, хĕпĕртенипе, ним кала та пĕлеймест. Пур сăмахĕ те—спаççибă, тесси çеç.., анчах ку сăмах та ăшĕнчен тухаймасť.

— Ку та анчах мар-ха, Укахви çемйи выçăпа аптранине кура, çĕнĕ тырă ĕлкĕриччен, ăна тунă ĕçкунĕсемшĕн çемйине пурăнмалăх аванс шучĕпе парса тăмала турăмăр, тет.

Колхозниксем: „урра“ кăшкăраççĕ, алă çупаççĕ. Комиссĕ малала ĕçлет. Ытти ударниксене парнелет. Укахви хĕпĕртет.

— Халĕ ĕнтĕ мана, ачасемпе, çиме çăкăр та пур, тумланмалăх тавар та пур. Мухтав—тĕрĕс ĕçлекен правленийе! Çĕнĕ пурнăçа çавăтса кĕрекен колхозăмăр сывă пултăр. унăн пурнăçĕ çирĕплентĕр. Ăна çирĕплетессишĕн тата пикенерех ĕçлĕп епĕ. Ытти хĕрарăмсене те хам пекех ĕçлеме чĕнетĕп, терĕ вăл.

Çурхи хĕвел хăпарнăçем хăпараť. „Çĕнĕ ирĕк“ колхоз пурнăçĕ те çулган çул ĕнтĕ ÿснĕçемĕн ÿсет. Колхозниксем колхоза йуратаççĕ. Колхоз членĕсем пурте Укахви пек ĕçлеме тăрăшаççĕ.